30-287

Ç. Шăпçăк

# Ваçça

калав



Хакĕ 12 пус

Çăваш кĕнеки уйрăмĕ
Шупашкар ★ 1930 çул

Ç. ШĂПЂĂК

# Ваçça.

Хĕвел ђăн-ђăнах тӳсме çук уйра шăратса пĕçертет. Кăнтăрла çитиђђенех анасшăн выљăхсем Çавала. Ђăтаймасăр сурăхсем выртаççĕ çавăнтах. Ĕнисем те кахаллăн пăхаççĕ шывалла.

Кăтăркка ĕни пĕђђенех уйăрăлђĕ кĕтӳрен. Ыттисене пăхмасăр ĕрĕхтерђĕ Çавала. Йулташĕсем те тытăнђĕç унăн хыçăнђен.

— Хас! Вăрахăн анăпăр. Шăрăх вĕт! — ђарђĕ вĕсене кĕтӳçĕ Ваçça.

Ĕнисем хуçа ђарнине итлерĕç. Унăн йенне кăмăллăн пăхса илђĕç.

— Тĕрĕс каларăн, тăванăм, — терĕç пулас ăнланса. Пуçĕсене кахаллăн силлесе вăрахăн тапранђĕç кайас çул çине.

Уй варринђе, катара, шуйттан ађи вăй выљать. Ана çинђи тусансене йупа туса пĕлĕт патне кармашать. Пуйăс пекех кĕрлеттерсе кĕтӳ çине тапăнать. Выљăхсемпе саланса кайса икке-виççе уйăрлать. Унтан кашни тĕллĕн пулса пысăккăшне çухатмасть.

Ђылай пулать çăмăр çуман. Çавăнпа тусан лăплан-

маст̆. Кунӗпеле ҫӳресен те выљӑх уйра тӑранмаст̆. Выҫҫипеле туттине те шӑрӑх пӗртте уйамаст̆.

Кӗтӳ хыҫҫӑн хӑрӑк тусан ҫӑмӑр пӗлӗђле хӑпарат̆. Выљӑхсем ӗнтӗ ђылай кайнӑ. Анђах тусан тӑпланмаст̆.

«Хӑҫан ҫӑвӗ ку ҫӑмӑр», шухӑша кайса пырат̆ Ваҫҫа. Унпала йунашар пыракан выљӑхӗсем те ҫавнах шухӑшлаҫҫӗ пулас. Пуҫӗсене усса, вӑрахӑн пыраҫҫӗ. Пӗртте васкамаҫҫӗ.

Сурӑхсем татти-сыпписӗр ӗсӗреҫҫӗ тусанпа. Пырсан-пырсан ҫавӑнтах выртаҫҫӗ шӑрӑхпа.

— Ӗ-ӗ-ӗҫ. Тӗ-ӗ-ӗр. Кӗҫех ҫитетпӗр ӗнтӗ. Ан йулӑр кунта ҫитнӗскерне. Айта, тӑрӑр! — хӑвалат̆ Ваҫҫа выртса йулакан сурӑхсене.

Сурӑххисем сиксе тӑрса ыттисене ҫитеҫҫӗ. Вӗсене Ваҫҫа йуратнине пӗтӗмпелех сисеҫҫӗ.

— Мӗкӗте. Ытла хытӑ ан утха! — кӑҫкӑрат̆ Ваҫҫа малта пыракан йулташне.

Сурӑхсем таттисӗр ӗҫӗрнипе, илтмест Мӗкӗте нимӗн те.

— Мӗкӗте-е-е. Вӑрахӑнтарах ут!

— Йурат̆!

— Выљӑхсем тарлаҫҫӗ. Шыв хӗррине ҫитетпӗр. Пӑсӑлма пултарӗҫ.

Ахаљ те вӑрахӑн пыракан Мӗкӗте тата вӑрахланђӗ. Выљӑхсем ун ҫине таптас пек пыраҫҫӗ. Пуши ҫине ӗнесем пусаҫҫӗ.

— Хас, вăрахăнтарах. Çитетпĕр вĕт! — хуйхатаť Мĕкĕте пуши çине пусакан ĕнесене пушине кайалла выљатса.

Анђах пĕтрĕ выљăхсен ђăтăмлăхĕ. Кĕрсех кайаççĕ вĕсем Мĕкĕте çине. Шыва курнипе хĕпĕртерĕç ĕнесем. Пуçĕсене сулла-сулла кăмăлланса утаççĕ. Мĕкĕтерен васка-васка иртсе кайма пăхаççĕ.

— Мĕкĕте, тăр. Кĕрсе кайђђĕр! — комантă пађĕ йулташне Ваççа. Хăй те пăрăнса йулђĕ ђакса.

Мĕкĕте тăрса йулђĕ кĕтў варрине. Иртеççĕ ĕнесем, иртеççĕ сурăхсем. Ĕшенђĕк сыснасем кайарах йулнă. Нимĕн шарламасăр иртеççĕ вĕсем те.

— Нăрик! — текен пĕри çук. — Ах! — тени илтĕнмест. Шăрăх пуснă пĕтĕмпех.

— Ђух, ђух, ђух! — йăхăрса пăхрĕ Мĕкĕте.

Пĕр сысни те шарламарĕ нимĕн те. Мăн шухăша кайнă пек иртсе кайрĕç сыснасем. Çăвăрисем çеç сиккелесе илђĕç пĕриккĕш.

— Çамрăк çамрăках. Çăвăрисем антраман. Выљас шухăшĕсем те пур тата, — пăхса йулђĕ Мĕкĕте.

— Шăрăхран çитнĕ ĕнтĕ пайан, — çывхарђĕ Ваççа Мĕкĕте çывăхне.

— Епĕр хăť... ђăтатпăр. Выљăхсем йепле ђăтаççĕши? Хĕлле те, çулла та пĕр тумтир. Кансĕрех çав вĕсене, — пĕрлешрĕ Мĕкĕте Ваççапа.

— Çавăнтарах ларас пуљ, — çерем çинелле вырăн кăтартрĕ Ваççа.

— Малтан шыва кĕрес пуљ. Ђăтма çук вĕт. Манăн хулайсем пиçсе кайрĕç.

— Тарланӑ çинђен нихăçан та шыва тӳрех кĕме йурамасть̆. Шывра шăнăр туртса лартма пултарать̆. Вилекенсем пур, — асăрхаттарђĕ Ваççа Мĕкĕтене. Хĕвеле тӳртĕн тăрса утасларĕ Ваççа хăй ĕмĕлкине. Шăп пĕр утас унăн ĕмĕлки. Унтан хĕвел çине пăхса илђĕ.

— Лăпах кăнтăрла, — пырса ларђĕ Ваççа Мĕкĕте çумне.

— Вăхăтпа çӳретпĕр.

Ёнесем пуçĕсене кăна кăтартса тăраççĕ шывра. Пуçĕсене те ђикĕтђĕç, вĕсем унта. Анђах, сывлăш çавăрма çук апла. Хутран-ситрен кăна майĕпе хăлхисене силлесе илеççĕ. Урăх нимĕн те. Шăпах.

Сурăхсем выртнӑ айлăма-сухăма. Тимĕрђĕ вĕркĕђи пек пашкаççĕ мĕскĕнсем. Çавах та кунта уйри мар. Уçăрах. Шывĕ те йунашар, çывăхрах.

Сыснасем курăнмаççĕ ниăçта та. Кĕрсе выртнӑ пĕтĕмпех пылђăка. Вĕсенĕн мĕн пурăнăçĕ те — шыври лађака. Выртма хатĕр вĕсем иртен каçђенех. Пурăнăç!

Кĕтӳрен çӳлерех, таса вырăнта, шыва кĕреççĕ Мĕкĕтепе Ваççа. Çав вăхăтрах апата кĕтеççĕ хырăмĕсем выçса.

— Апатпа çитсе тăмарĕç пулĕ теха? — терĕ Мĕкĕте тепĕр хут ђăмса.

— Асăрхасах тăратăпха. Килни курăнмасť, — терĕ Ваçça, Мĕкĕте шыв айĕнђен тухсан.

— Мĕншĕн ђăммастăн, Ваçça? — ыйтрĕ пĕрмай ђăмакан Мĕкĕте.

— Ђăмсан пуç ыратакан пулаť. Хаљ шăрăх вĕт. Епĕ ишме йуратататăп. Ишни усăллă ђăмнинђен. Вăт, çапла ишес пулаť. Атăл çинђе çапла ишеççĕ. Капла ишсен — ишме те çăмăл, — аллисемпе кармакланса ишсе кайрĕ Ваçça Çавал тепĕр хĕрнелле.

— Тухас пуљ. Çитĕ...

— Супăњпе çăвăнмасăрахи... Ӳт тикĕт тĕслĕ пулаť апла. Тусанпа куç пăсăлаť. Илсе çăвăн вăн, супăњ, — Çавал леш йенђен ђарђĕ Ваçça Мĕкĕтене.

Ваçça кирек хăçан та тирпейлĕ çӳренĕ. Унăн çăкăрĕ те пиртен хутаçпа мар. Хурăн хуппинђен çĕленĕ пĕђĕк кушелпе. Унтах унăн супăнпе алшăли. Çавăнтах турипе хађђи.

Ваççан кушелне тусан кĕреймен. Çавăн пекех, шалкăм çăмăр та витеймен.

Ваççана тирпейсĕр, йапăх çӳренине кураймăн. Кĕтӳçĕ теме нихăçан та хăйаймăн. Кĕпесем таса. Ыттн кĕтӳçĕсен пек çĕтĕк, кăвак йĕм тăхăнмасť. Унăн йаланах шалавар. Йал кађђисем ун пек çӳреймен. Анђах вăл никама та нимĕнпе хапсăнман. Çав вăхăтрах тăшмана нихăçан ум паман.

Çавăн пек пулнă Ваçça. Çавăнпа та унăн пайан та супăњ. Çăвăннă хыççăн таса алшăли.

— Çапла пурӑнас пулаҭ пурӑнӑça. Мӗн çӗрсе пурӑнмалли пур тӗнђере, — шӑлӑнса лараҭ Ваççа шывран тухсан Мӗкӗтене вӗрентсе.

Ах, апат пулсан хаљ çакӑнта! — тумланса пӗтерсе, апата аса илђӗ, хырӑм выçнӑ Мӗкӗте. Ваççа каланине кӗмерӗ ӳкӗте.

Пӑртакçӑ выртса канатпӑр апат килиђђен, — илӗртрӗ Мӗкӗтене Ваççа.

Хӗвел хӗртнӗçемӗн хӗртет. Тусан йуписем те çавӑрӑнаççӗ уйра. Паçӑрхи пекех вӗсем пӗререн виççӗ, виççӗрен тӑххӑр пулаççӗ. Мӗн пур уйа хӑйсен аллине çавӑрса илеççӗ. Пӗрре хыттӑн кӗрлесе, тепре вӑраххӑн йарӑнаççӗ. Ирӗк пыракан çынна сеххӗрне хӑпартаççӗ. Лешӗ ирӗксӗрех çава-пекке кӑларса, хирӗç тӑнӑ пек пулаҭ:

— Килха кунта!

Çавалпа йунашар йешӗрет çаран. Каçма та çӑмӑл, çырансем сӗвек. Анђах шут тытмаççӗ выљӑхсем каçма. Паçӑрхи пекех тӑраççӗ шывра, мӗшӗлт те тумаççӗ. Хӑраççӗ шӑрӑхран.

Мӗкӗтепе Ваççа пуплеђђӗç кӑна. Анђах çывӑрса кайнӑ, хӑйсем те сисмен. Шӑрӑх пуснӑ пулас вӗсене. Ӗшеннӗ.

* * *

Укахви киле кӗнӗ çӗре амӑшӗ апат хатӗрлет. Пӗђӗкçеç шурӑ ђӗрес уйран. Çӳçеллӗ, шурӑ тутӑр çине çыхнӑ çыртмалли.

— Кайса çитерсе килха, хĕрĕм, — терĕ Укахвийе амăшĕ кĕнĕ-кĕменех.

— Ху каймастăни, анне? — йăвашăн, куç айĕпе пăхса, илђĕ Укахви.

— Ара, мана, ватă çынна... Кайса килех...

Амăшĕ кайма тăнă пулсан та Укахви хăйех каймаллађђĕ. Ваççапа вĕсем калаçса хунă ирхинех.

— Ытла каплипех тухса ан кай, ађам. Пăртак йакарах пул, — систерђĕ амăшĕ Укахвийе.

Амăшĕ сăмах хушнă хыççăн йусанса илђĕ Укахви. Амăшĕн кăмăлне пусарас терĕ пулас. Унтан апат хатĕрĕсене йăтрĕ те:

— Сывă пул, анне! — выљатрĕ Укахви.

— Ђипер, ађам. Апла каласан тавăрăнмасť тет çын киле кайалла, — терĕ амăшĕ йăвашшăн.

— Тавăрăнаť тетнем тата? Курăн — тавăрăнмастăп... — йăл кулса илђĕ те тухрĕ Укахви кайма.

— Ђипер çӳрех, хĕрĕм.

— Хăратним, анне?

— Каçпала улма çăмлама каймалла, тетĕп.

Марйинесем Укахвисенђен икĕ кил урлă пурăнаççĕ. Вĕсем пĕрмайах пĕрле çӳреççĕ. Питĕ те килĕштереççĕ пĕр-пĕрне.

— Манмăпăр епĕр ĕмĕрне, — теççĕ вара хăйсем те.

— Марйине пури? — ыйтрĕ кантăкран Укахви.

— Сирĕн пата кайатăп тесе тухрĕ вăл халђ çеç! Пымари еппин?

— Ан суйха, инке. Васкамалла!

— Кунта, кунта! — çав самантрах васкаса тухрĕ вырăсла хапхаран Марйине.

— Кайатпăри?

Хĕвел кăнтăрларан сулăннă каç йенне, çавах та пĕçертет, пăхма çук унăн сăнне.

— Кайарах йултăмăр пуђ, — терĕ Укахви.

Укахвипе Марйине тухрĕç уй хапхинђен. Вĕсенĕн тепĕр çухрăма йахăн каймалла. Тăвайкки тăрринђен айлăмра курăнаť вĕсем çитес вырăн.

Питĕ те илемлĕн курăнаť кĕтӳ. Ĕнесен пуçĕсем тункатанăн курăнаççĕ шыв çинђе. Сурăхсем çыранта хуплană лаптак.

Кĕтӳ урлă леш айккинђе çаран ишĕлет. Тĕрлĕ тĕслĕ ђеђекĕпе хăй йенелле илĕртет. Курăксене куçпа пăхсан: йури лартнă, темелле. Такамăн та иртсе пынă ђух татса илес килмелле.

— Апат çитерсен ђеђексем каçса татăпăрха улăха.

— Ман халех каçса татасђĕ.

— Апатпа лартса пама-и? — йăли кулђĕ Марйине.

— Ђеђексемпе çийен çынсем мар пуђ вĕсем, — терĕ Укахви уйран ђĕресне тепĕр аллине улăштарса.

— Тытха, тутӑра йусам,—аллинђи апат сыхнӑ ђӗнтӗрлӗ, шурӑ тутӑра Укахвийе тыттарђӗ Марйине. Хӑйӗн ҫӳхе тутрине куҫарђӗ ҫамки ҫинерех.

— Ҫапла сыхмасан хӗвел ҫамкана саратат̆.

— Манне те йусаса йарха,—терӗ Укахви.

— Тавай тутрине. Ху йуса.

Ҫитес ҫӗре сывхараҫҫӗ икӗ тус. Ӗнисем те, сурӑхӗсем палӑраҫҫӗ лайӑхах. Кађакисем те тухнӑ ҫереме. Анђах курӑнмаҫҫӗ кӗтӳ ађисем.

— Хӑйсем курӑнмаҫҫӗҫке,—терӗ Укахви.

— Выртнӑ пуљ сулхӑма. Шӑрӑх вӗт.

— Киле пымарӗҫ пулсан...—Хӑранӑ пек пулса вӑрӑмӑн ђӑсрӗ сӑмаха Укахви.

— Курмарӑмӑрҫке...

— Анкартипе кӗђӗҫ пуљ. Ытла нумай пурӑнтӑмӑр. Васкамаллађђӗ...—кӑмӑлсӑрланђӗ пӗтӗмпех Укахви.

— Айтаха патнерех. Йалан катаран кулљанан, тен сывӑрса кайнӑ пуљ?—Укахви кӑмӑлне пусарђӗ Марйине.

— Паҫӑртарах тухмаллађђӗ,—кӑмӑлсӑр пулса лартрӗ ђӗресне Укахви.

Кӗтӳ хӗррине ҫитсе ђарӑнђӗҫ. Пӑхаҫҫӗ тавралла, курӑнмаст̆ никам та.

Вылђӑхсем тӑраҫҫӗ тӑпах. Виҫӗ кађака ҫеҫ тухнӑ ушкӑнран. Сыран хӗрринђи ҫерем ҫинђе ҫӳреҫҫӗ

ашăхса. Çимеççĕ ура айĕнђи курăка. Кармашаççĕ симĕс хăва купине.

— Ĕç-ç-ç, кађака!—илтĕнђĕ Ваççа сасси хăва тĕми ăшĕнђен.

— Е-е-к-кей, кĕтӳ пуçлăхĕсем. Пирĕн сулхăма çийеççĕ. Ура айĕнђи курăка пăхмаççĕ, тĕ-ĕр-р. Кайăр кĕтĕве!—тăрса хăваларĕ Мĕкĕте.

Укахвипе Марйинен кăмăлĕсем уçăлђĕç. Пĕр пĕрин çине пăхса, йăлли кулса илђĕç. Кăрт-карт! турткаларĕç кĕписене.

— Каларăм вĕт сана,—терĕ Марйине çамка çинђи тутăрне кайалла туртса.

— Ара...

— Апат çитнĕç. Паçăрах килтĕри? Ма шарламастăр? Ывăнтăр пуљ? Килĕр кунта!—хыпаланса ыйтрĕ хырăм выçнă Мĕкĕте.

— Пыратпăртаха!—терĕç Укахвипе Марйине. Апађĕсене йăтса утрĕç хăва тĕми патнелле.

— Çывăртăрим?—ыйтрĕ Укахви.

— Çывăрман. Тĕлленнĕ çеç,—васкаса ларђĕ Мĕкĕте хăва тĕми айккине.

— Лартăр кунта,—терĕ вăлах, вырăн кăтартса.

— Ваççа ăçта?—ыйтрĕ Укахви.

— Ђолккассине хĕр пăхма кайрĕ теха, килеймерĕха. Пайан пĕђђенех çӳрерĕм,—терĕ Мĕкĕте, Укахви çине сылтăм куçне хĕссе пăхса.

— Анђах сасси пурђĕ вĕт...

— Ман сасă темиçе тĕрлĕ пултарат̆. Ме-у-у-ук, ме-у-ук!—кушак пек макăрса илђĕ Мĕкĕте.

Ĕненмĕшле пăхса илђĕ пĕрре—Мĕкĕте çине, тепре Марйине çине Укахви.

— Акă йăтă пек вĕретĕп:—Хам, хам, хам, хам хам! Акă, Ваçça пек кăшкăратăп: кађђа-а! Йăтă пек те, Ваçça пек те улăштарса илђĕ хăйĕн сассине Мĕкĕте.

— Паçăрхи ђăнах та Мĕкĕте сасси пулђĕши?—шухăшласа илђĕ хăй ăшĕнђе Укахви.

— Хĕр пăхма кайакан—картуссăр кайат̆и?.. Ак, Ваçça картусси выртат̆. Ĕ-е-е, кунта пиншакĕ те пур, Укахви,—туртса кăларђĕ хăва тĕми тепĕр йенђен Марйине.

— Ей, хĕр пăхма кайакан. Апата кил ђасрах. Уйран сивĕнет. Ђасрах!—кăшкăрђĕ вăлах хăвасем хушшине.

— Сире пайан кĕтни епĕр. Мĕкĕте кĕт çеç выçса вилеђђĕ. Выртса-йăванса макăрат̆,—Ваçça питне шурă алшăллипе шăлса тухрĕ хăвасем хушшинђен. Вăл хăвасем хушшипе шыв хĕррине аннă пулнă.

— Васкамасăр та...—терĕ Укахви.

— Питне кайса çу. Пит çумасăр çиме ларан йаланах. Мĕн ђухлĕ каланă,—Мĕкĕтене ђĕрес кутĕнђен тăратрĕ Ваçça.

Пĕр вăхăтра пурте шăпăртах пулђĕç. Ваçça ђĕрес патне ларђĕ. Укахвипе Марйине пĕр ђĕнмесĕр

пăхрĕç Ваççа çине. Унтан пĕр-пĕрне сисмелле пăхрĕç. Каллех вĕсен куçĕсем Ваççа çинђех ђарăнђĕç.

— Ну, мĕнле пурăнатпăр?—пуçне çў̆лелле илђĕ Ваççа. Куçĕсем унăн кулђĕç Укахви çинђе.

— Сирĕн йалсем йепле?..—хутшăнђĕ Марйине.

— Васкарăмăр та... терĕ Укахви каллех. Хăйсем кайа йулнинђен шикленме пăрахмасť. Нимĕнле мар, ăшăрханса тăраť.

— Васкарăр еппин?.. вултмалла йăлкăшрĕ Ваççа, Укахви куçĕнђен пăхса.

— Ах, мĕн калама пĕлем ĕнтĕ?..—терĕ Укахви.

— Ма-ан киле-ес!—питкуç çуса хăпарђĕ Мĕкĕте шыв хĕрринђен.

— Тĕпелерех ирт!—йăлкăшрĕ Марйине.

— Ђасрах лар!—терĕç Мĕкĕтене Ваççапа Укахви.

— Уйранне вĕрсе сып... Пиççе кайăн... Хам вĕрсе парами?..—çăмăллăн каларĕ Мĕкĕтене Марйине.

— Ларăр...

* * *

Ваççапа Мĕкĕте ларђĕç апата. Укахвипе Марйине тăраççĕ пăхса. Марйине ђарăнмасť выљатма. Çаплах тăрăхлаť Мĕкĕтене.

— Мĕкĕте, вăн Мĕкĕтесем тухса кайрĕç кĕтў̆рен. Мĕкĕте-е-е!—теççĕ. Çухатнă вĕсем сана. Мĕкĕте кунта тесе кăçкăраси вĕсене?

— Кăçкăр. Анђах, кăçкăрнипе илтĕнтерейместĕн?!.. витсе хуђĕ сăмаха Мĕкĕте.

— Çăмартисем... те калакла пулнă ĕнтĕ. Çĕмĕрсе пăхăрха,—ђунтан кансĕрленет Укахви.

— Кайалла парса йамăпăрха... кирек мĕнле пулсан та...—тӳррĕн çеç çапса хуђĕ Ваççа.

Кун хыççăн Укахви хĕрелсе пĕтĕм ăшăрхаса кайнă пек пулђĕ. Уншăн Ваççа çиленнĕнех туйăнаť пайан.

Ваççа кашни кун култараканђђĕ. Темĕн те каласа параканђђĕ. Пайан сăмаха тӳрĕрен те тӳрĕ кăна çапаť. Ытлашши сăмаха пĕрре те вакламасť. Çавăнпа та Укахвин ăшĕнђе пушшех те çавăрăнаť. «Ђăнах та хăтана кайса килнĕшим вара ку Ваççа?» ыйтаť Укахви хăйне хăй ăшĕнђе.

Марйинепе Мĕкĕте çапаççĕ йумаха. Вĕсенĕн кулли парăнтарăймасť Укахвипе Ваççана. Паçăрхи пекех, Ваççа лăпкă. Паçăрхи пекех, вакламасť сăмаха.

— Аннене хăйне йамаллађђĕç кунта апата,—терĕ Укахви Марйине çине пăхса. Унăн сăнĕ пĕтĕмпех улшăннă. Вăл халех макăрса йама та хатĕр. Пĕр сивĕрех сăмах çеç кирлĕ Ваççаран. Анђах, Ваççа сисрĕ пулас Укахвийе.

Çавăнпа та йуптарђĕ йумаха вăраххăн шăлса...

— Ывăнђĕ пуљ ĕнтĕ ку пĕђĕк хĕрĕм. Ларса кан çакăнта. Килех, у-у-у пĕђĕкскерне.

— Мăшкăлама тытăнатăн есĕ, Ваççа!

— Темĕнле йурамалла ĕнтĕ.

— Ара ху...

— Ара еп....

Ваççапа Укахви пăхса илђĕç пĕр-пĕрне. Вăрахăн кулă кўђĕ тути çине Ваççа. Укахви те хăйĕн çўхе тути хĕррисем витĕр кăтартрĕ илемлĕн вырăнаçтарнă шурă шăлĕсене.

— Шĕкĕнтĕркасси çинђе хĕвел пăха пуçларĕ,— тăрăхласа илђĕ Укахвийе Мĕкĕте.

— Мĕкĕтекассинђе ытла та пĕçертет,—терĕ Марйине. Туртарах илђĕ Мĕкĕтене хăй çумне.

— Укахвийе кашăкне тасатсах парса йарасха,— йулашки кашăк уйран сыпса çулласа илђĕ Мĕкĕте кашăка ђĕлхепе.

— Вĕри çатма çине çуллаттарас пулаŏ сана, Мĕкĕте. Ђĕлхесем ытла та вăрăм санăн,—тăрăхласа илђĕ Мĕкĕтене Марйине.

— Кашăк çăвайман вырăннех хуратнихе есĕ мана?..—йăвăррăн илђĕ хăй çине Укахви Мĕкĕте сăмахне.

— Есĕ мана пайан çеç палламастăн вĕтха? Мĕн уншăн çилленмелли пур? «Спаççипă, Микит Микиђ!» тесе калас пулаŏ санăн. Епĕ те сана: «йăвăр ĕçех туман, Укахви Йăванăвнă. Спаççипă темеллĕхех çук. Çавах та рехмет ырă сăмахшăн» теттĕм. Покрайнăй мере ырă çынсем пек пуплесе илеттĕмĕр.

Çапла вĕт, Укахви,—Укахви апат пуçтарнă çĕре ђĕркуçленсе йăпатрĕ Мĕкĕте.

— Йăпатса йама пĕлетĕнçке есĕ, Мĕкĕте...

— Нет, Мĕкĕте мар. Микит Микиђђă. Хаљ хырăма тăрантарнă. Выçă ђухне «Мĕкĕте» тесе ђĕнесçĕ мана. Ахаљ...—хырăмне икĕ аллипе шăлса илђĕ Мĕкĕте.

Ваçça хăйĕн хурăн хуппинђен тунă кушелине илђĕ хăй патне хăва çумĕнђен. Вăраххăн уçса кăларђĕ пĕр хаçат. Вăраххăн саркаласа пăхрĕ те, тыттарђĕ Укахвийе.

— Епĕ паçăрах вуласа тухрăм. Ес вуламан пуласха. На, вуласа тух.

— Виçĕм кунхине вуланă епĕр Марйинепе.

— Ку ĕнерхи. Есĕр курман ăна. Комантировккă йепле илмеллине кăтартнă унта,—тупса пађĕ хаçат çинђе Укахвийе Ваçça.

— Йурĕ теха. Есĕ хаљ ђиттаљнăна кайса килме ĕлкĕрейетне?—терĕ Укахви.

— Çук, каçхине,—терĕ Ваçça.

— Хаљ кайас пуљ пирĕн?—пуçтарăнђĕç хĕрсем.

— Хаљ епĕр те кайатпăр ĕнтĕ. Хĕвел пĕçертни пăртакçă ђака пуçларĕ. Паçăр сурăхсем ытла та аптăрарĕç. Хаљ аплах пулмĕ ĕнтĕ.

Укахвипе Марйине вăрахăн тапранса утрĕç килĕ йенелле.

Укахви йулашки хут пăхса илђĕ Ваçça çинелле.

— Ха, кĕнекене кăларнă та,—кăтартрĕ Марйинене Укахви.

— Пирĕн те çине тăрсах вĕренмелле. Вăл кĕрĕ те, епĕр кĕреймесĕр йулăпăр вăт. Хаљ епĕр вăл мĕн вĕренме хушнисене вĕренсе пĕтермен вĕт. Вăл пирĕнтен нумай малта пырать,—терĕ Марйине, хăйĕн çамка çине антарнă тутăрне кайалла туртса.

Ваçça ђылайђђен пăхса тăђĕ ĕнесем çине. Сасартăк:

— Укахви, Укахви,—кăçкăрса ђарђĕ Çавал хĕринђен çул çине тухнă хĕрсене.

— Илтетпĕр!

— Çитес ернере райкома кайатпăр. Çине тăрсах вĕренĕр. Пĕђђен-пĕђђен кансĕр. Пĕрле вĕренĕр. Епĕр те Мĕкĕтепе пĕрле вĕренетпĕр.

— Хаљ те пĕрле вĕренетпĕр теха,—кăмăллăн утрĕç хĕрсем йал йенелле.

— Ха-ас. Айтăр çĕр кăшлама!—вăрăм пушине ђăсса сас турĕ Ваçça.

— Микит Микитђран салам калăр Шĕкĕнтĕркассисене,—аллисемпе тăрпа пек тута çумне тытса кăçкăрђĕ Мĕкĕте хĕрсене. Ваçça урăх вĕсем çине пăхмарĕ. Çавалран çерем çинелле тухакан выљăхсем çине куçарђĕ вăл куçĕсене.

Кађакасем малтанах уйăрăлса кĕтӳрен сулахай йенелле пăрăнђĕç. Ĕнесем хăйсем каннишĕн савăнса

пуҫӗсене ҫӳле тытса тухрӗҫ Ҫавалран. Хӑшӗпӗрисем ђылайђђен мӑн шута кайнӑ пек пӑхса тӑђӗҫ. Хӑшӗпӗрисем пӗшкӗрӗнђӗҫ те, йе Ваҫҫа йенелле, йе Мӗкӗте йенелле пӑхса илђӗҫ каллех пуҫӗсене хӑпартса. «Мӗншӗн пире ҫимеллӗх те курӑк ҫук?» — тесе ыйтнӑ пекех туйӑнђӗ Ваҫҫаран.

— Хуҫасем айӑплӑ. Хаљ уйра хӑрӑнса пурӑннипе ҫитместха. Каҫ та выҫӑ тӑмалла пулаҭ. Нумай пусӑва куҫнӑ пулсан, апла пулман пулӗђђӗ те ҫав... Хас! — терӗ Ваҫҫа хӑй ҫине пӑхакан ӗнесене сасӑ парса.

Ӗнесем Ваҫҫана кӑмӑллӑн пӑхӑнса утрӗҫ анасем ҫинелле. Ҫавал паҫӑрхи пекех йулђӗ хӗвелпе выљаса. Ҫавал лешӗ йенђе выртаҭ ҫаран ишӗрсе. Мӗн тӗрлӗ курӑк, мӗн тӗрлӗ ђеђек. Анђах, каҫман унта кӑҫал та пӗр путек. Мӗн хаљ таптас. Пулаҭ вӑл хӗллехи саппас.

Мӗкӗте ђылайђђен пӑхса тӑђӗ хӑй ҫине темӗн каласшӑн пек йӑвашшӑн пӑхакан ӗнесем ҫине. Ђӑтаймарӗ вӗсене хирӗҫ ђӗнмесӗр.

— Туртса антарӑттӑмђӗ пӗрре ку ҫӑмӑра...

— Хӑйсемех кайаҫҫӗ хаљ. Кил кунта, — ђӗнсе илђӗ хӑй патне Мӗкӗтене Ваҫҫа.

— Ҫак ыйтусем тӑрӑх есӗ ыйт. Епӗ ответ парса пырам, — тесе тыттарђӗ вӑл Мӗкӗтене политкрамӑттӑ кӗнеки.

Кĕтӳ уй варринђе. Хăпарса çитрĕ вăл Çавал хĕр-ринђи çерем çинђен. Ваççапа Мĕкĕте вăрахăн çеç утса пыраççĕ вылђăхсем хыçăнђен.

— Кĕрсе кайрĕç, — терĕ Мĕкĕте Ваççана Укахвипе Марйине йал хапхинђен кĕнине кăтартса.

— Вĕсем вĕреннине пĕрре сăнаса пăхмаллахха, — терĕ Ваççа та йал йенелле пăхса.

Хĕвел ытлах хĕртмест, лăпланаť. Тусан йупасем те кармашмаççĕ пĕлĕте. Хĕвеланăç йенелле пĕлĕт шупкаллă хĕрелет. Хĕвеле хирĕç хура пĕлĕтсем хăпараççĕ. Анђах çавăнтах саланса кайаççĕ. Уйар çанталăкăн сăнĕ парăнмасť.

*
* *

Тăлăх ађа вăл Ваççа. Выçлăх çулхине Ваççанăн ашшĕ-амăшĕсем Çĕпĕре кайнă. Ваççана вĕсем пă-рахсах хăварнă. Ваççа вĕсемпе хăйех кайасшăн пулман. Ваççа ун ђухне 12 çулхи ађа. Çавăнпа та вăл ашшĕ-амăшĕсене лайăх астăваť. Амăшĕ ăна йулашки хут ђуптуса хăварнине те астăваť лайăх. Амăшĕн сăмахне те манман вăл. «Лайăх пурăн, ывăлăм. Çын пулма тăрăш. Аллу тӳрĕ пултăр, пуçу çирĕп пултăр. Сывă пул», тесе тута пађĕ ăна амăшĕ йулашки хут. Нумайђђен ыталанса макăрђĕç вĕсем пĕр-пĕрне. Манма пĕлмест ăна Ваççа ĕмĕрне. «Анне-не курасђĕ пĕрре вилеђђен. Анђах, тăпра пулнă пулђ тахçанах», тесе шухăшласа илет Ваççа хутран ситрен.

Ашшĕне те лайăх астăваҭ Ваçça. Анђах ăна аса илмест пĕрмайах. Сивĕннĕ пек туйăнаҭ ăна ашшĕнђен. Уйăхĕпе çăкăр ăша йаман ашшĕ, кайнă ђух пĕрик ђеркке сăмакун сыпнă пулнă. Çавăнпа та пĕлмийех ўссĕрђђĕ килтен тухнă ђух. Ваççана та вăл нимĕн те каласа хăвараймарĕ. Вăрçма çеç пикенђĕ ўссĕр пуçĕпе. Çĕпĕре кайма тăриђђен те йуратсах каймасђĕ вăл Ваççана. «Пĕђĕклех хут ăшне путăн. Кил-çурт пăхакан çын пулас çук санран. Пулăн çав таçта сĕтĕрĕнсе çўрекенскер. Вăн, Çинахван йепле çўрет. Киле те килсе курăнмасҭ нихăçан та»,—Ваççана ашшĕ йаланах хăйсен кўршĕ Йакку ывăлĕ Çинахван çине кăтартаҭђĕ. Çинахван ђăнах та килтен тухса кайни темиçе çул та çитнĕ. Вăл катари йалта уђђитлĕре пурăннă. Ку сăмахсемпе ашшĕ Ваççана нихăçан та хурлантарайман. Ваçça Çинахван пиђђĕшĕ пек пуласшăн пулнă. Çавăнпа та вăл, шкула кайман пулин те, йулташĕсенђен кĕнекесем илсе, вĕсем кăтартнипех вулама вĕреннĕ. Çаксем пурте Ваççан пуçĕнђех. Çаксене аса илнипе те вăл ашшĕнђен сивĕннĕ пек те пулаҭ. Çавах, ытлах мар.

Пуринђен ытла Ваççан шăлнĕпе пĕђĕк йăмăкне курас килет. Вĕсене вăл пĕрмайах аса илет. Пĕђĕк ђухне вĕсемпе выљаса çўренисем йаланах тухса тăраççĕ Ваççан куç умне. Пахђана, улма йăрансем çине тухсан, пытанађђĕ вăл вĕсенђен. Лешсем йă-

рансем хушшинђе кăçкăрса шыраса çӳретђěç. «Пиђђе, еç пуйи? кий кунта!» тесе йăпанађђě Ваççан кěçěн йăмăкě—Хăвакла. Йе тепěр ђух тата: тупйăми, пиђђе, пиђђе, тесе утлансаларађђě. Йăран хушшинђе шыраса тупсан, калама çук савăнса, йăтă çури пек кăшлађђě.

Çемйепе ларса апат çинисем те аса килеççě Ваççана. Кам хăш тěлте ларса çинисене шутласа тухаť хăшпěр ђух. Каллех Хăваклана аса илет. Вěсем апатра йаланах йунашар ларађђěç. — Вěйсе пай, пиђђе! теђђě Хăвакала сивě уйранах ăсса, ађашланса. Вěрсе памасан йěме тытăнађђě.

— Вилнě пуљ халђђен. Сас-ђěв çук,—тет хăй тěллěн хăшпěр ђух Ваççа.

Унтан каллех вăрăм шухăша кайаť. Хăй пурнăçне виçсе пăхаť. Çавăнпа та шăлнěпе йăмăкě çинђен те хăй пурнăçě пекех аса илет.

— Вилмен пулсан—пурăнаççě пуљ. Ман пекех кěтӳ кěтеççě пуљ пěр пěр йалта. Йал çыннисем лайăх пулсан пыраť...

Çав вăхăтрах вăл куккăшсен ађисене аса илет. Ваççан куккăшсем выçлăх çул вилнě. Куккăшсен ађисем: Петěрпе Йаруç ађа çуртěнђе пурăнаççě. Вăл, вěсем патне кайса та кураť. Вěсем лайăх пурăнаççě.

— Тен... çавсем пек ађа çуртěнђе пурăнаççě пуљ,—шухăшлаť Ваççа хăй тăванěсем çинђен.

Ашшёсем Çĕпĕре кайсан Ваççа малтанлăха кукăшĕсем патне йулнăҔҔĕ. Çăварнисем çитес тĕлнелле кукăшĕсем те йăлтах аптăрарĕç. Выçлăх парăнтарҔĕ вĕсене. Пĕр ирхине куккăшпе арăмĕ те пĕр сехетрех вилсе выртрĕç. Ҕĕререн макăрҔĕ Ваççа. АнҔах макăрнипе сирме çук нуштана. Петĕрпе Йаруç пĕлсех каймаççĕ вăл вăхăтра. Ашшĕпе амăшĕ тупăкĕ çине выљама кĕресшĕн макратҔĕç вĕсем. Çав икĕ пĕҔĕк аҔапа тăрса йулҔĕ кукăшсен килне Ваççа.

Çав кунсенҔех аҔасене тыр пулнă вырăнсене йама тытăнҔĕç. Йалсовет пуçлăхĕпе йалти уҔитлĕ Ваççа патне хăйсемех пыҔĕç.

— Петĕрпе Йуруçа йаратни тен, Ваççа? — терĕç ăшă кăмăлпа.

Ваççа хĕпĕртесех килĕшрĕ. Петĕрпе Йуруçа савăнсах ăсатрĕ. АнҔах хăйне илсе каймарĕç.

— Пурăнкалайни, аҔам? Тата Çитăркка аҔисене те ăстамалла вĕтха. Вĕсем ниçта та тухаймаççĕ. Сана та шел те ĕнтĕ... — питĕ те хурланмалла, питĕ те хĕрхенсе каларĕ йалсовет пуçлăхĕ Ваççана. Ваççа хурланнă пек пулҔĕ пĕрре. АнҔах унăн кăмăлĕ çавăнтах çаврăнҔĕ.

— Пурăнкалайпи ĕнтĕ...

Çак сехетрен вара Ваççа пĕр пĕҔҔен тăлăх йулҔĕ тĕнҔене. Ашшĕ-амăшĕ, пиҔҔĕш-инкĕшĕ, пĕлĕш-тантăшсем, никам та йулмарĕç Ваççан.

Ашшӗ-амӑшӗсем Ҫӗпӗре кайнӑ ђух хӑйсен пурлӑхне йӑкӑлтах сутса хӑварђӗҫ. Пӗр мунђа ҫеҫ хӑварса пађӗҫ Ваҫҫана.

— Асӑнмаллӑх пултӑр, ађам, сана. Вилмесен—пурӑнкалӑн ҫавах. Атте-анне тивлеђӗ тесе кӗркелесе тухкалӑн...—пиллерӗ амӑшӗ.

— Унтан етем пулийес ҫук. Хут татӑксене йуратаканскер. Ҫинахван пек сӗтӗрӗнсе ҫӳрекенскер пулӗ пӗр. Килҫурт тытакан ҫын пулайас ҫук санран!—терӗ Ваҫҫана ашшӗ, пӑртак шӑннӑ улмаран йухтарса тунӑ сӑмакункkӑна сыпкаланӑскер.

Ҫавӑн пек пурлӑхпа тӑрса йулђӗ Ваҫҫа ашшӗ-амӑшӗсенђен. Анђах унпала та нумай пурӑнмалла пулмарӗ. Ваҫҫана: пӗтнӗ пӗтнех пӗттӗр ку, терӗҫ пулмалла. Ваҫҫа йал тӑрӑх кайсан, вут тӗртнӗ вӑл мунђана та Харсӑр Кавӗрле. Ваҫҫа тавӑрӑннӑ ҫӗре кӑмрӑкӗ те, кӗлӗ те йулман мунђа вырӑнђе. Ҫил ађисем кӑна шаккаҫҫӗ, пӗр пӗђђен ҫеҫ тӑрса йулнӑ мунђа ҫумӗнђи йӑмрана. Вӗсем ҫеҫ шӑхӑрса туй тӑваҫҫӗ. Тискер вырӑн. Кӑмӑл туртмасӗ ку вырӑна пӗрре те. Пушӑ. Уҫӑ. Кӑмӑлсӑр!

Ҫакӑнтан кайран кайса кӗмелле пулђӗ Ваҫҫан куккӑшӗ патне те. Анђах унта та савӑнмалли ҫук. Ҫавах ҫӳремелле йал тӑрӑх. Кӗлемҫӗ хутаҫҫи уйӑрӑлмасӗ Ваҫҫаран. Мӗн пур ырлӑхӗ те кунта—каҫхине ӑшӑнса ҫывӑрни. Урӑх нимӗн те ҫук куккӑшӗ килӗнђе. Куккӑшӗсем вилсен Петӗрпе Йуруҫа

ăсатрĕ. Çав кунтан вара Ваççа ку килте пурăнма хăй те пăрахрĕ. Тискер пĕђђен пурăнма тăлăх кил-çуртра.

Тухса утрĕ Ваççа кĕлеме, йалран йала пуçтарса çӳреме. Анђах никам та памаççĕ. Мĕншĕн тесен, пурте выçă лараççĕ. Пурте Ваççа пекех тĕнђе тăрăх кайма хатĕр. Анђах хăш йенне кайас? Ăçталла тырă пур? Çук! Пур çĕрте те выçлăх.

Кун каçиђђен икĕ-виçĕ улма тупсан, хĕпĕрте. Савăн! Анђах ăна та тупма хĕн. Малтанах пĕрре ыйтса тĕпђеççĕ.

— Хăш йалсем? Кам тавраш̆ĕ? Аçу-аннӳ пури? Миçе çулта? Миçен пурăнатăр?

Çак ыйтусем çине ответ парас пулат̆ малтанах. Кашни килтех çак ыйтусем пулаççĕ. Мĕскĕнĕн, куçа хупа-хупа каласа паратăн. Унтан вара тин хĕр-хенсе:

— Хамăр та выçă ларатпăр çав. Çулĕ çапла килђĕ те ĕнтĕ...—тесе хураççĕ. Вăтаннă пек пулса тухса утатăн ку килтен. Тепĕр килĕнђе те çавах. Унта та уйрăм усси çук. Параççĕи, памаççĕи? Ыйтса тĕпђеççĕ. Ђĕре ыратат̆. Йулашки вăй çыв-харса килет.

— Йапала хĕстерекен ађа мари есĕ? Сирĕн пеккисем вăрлама йуратаççĕ,—тесе хураççĕ хăшĕ-пĕрисем.

Ку сăмахсене калакан пĕр килте кăна мар. Пĕр йалта та анђах мар. Ăçта çитнĕ унта çак сăмахсемпе перĕнтереççĕ. Ахаљ аманнă ђĕрене пĕтĕмпех ђĕтретеççĕ. Анђах тӳсес пулаť. Выçлăх çул. Калама канас.

* * *

Çапла çӳресех çитсе кĕђĕ Ваççа Шĕкĕнтĕр кассине. Хĕрĕнђи пӳрт. Хурал пӳрђĕ. Канмалла кĕђĕ Ваççа ку пӳрте. Анђах туллийех кунта Ваççа пексисем. Пуçтарăннă тĕрлĕрен йалсенђен. Пурте выçă. Пурте нăйкăшаççĕ.

— Йутă çĕрте ђунне пађĕ, шеремет!—вăрахăн. тискер сасăпа каларĕ пĕр арăм. Çавăнтах хăй аллинђи ађине хуђĕ сак çине.

— Тула илсе тух. Вилĕ шăршă кĕрекен пулаť пӳртре!—терĕç тĕттĕм кĕтесре выртакан 3—4 арçын.

Арăмĕ макăрма хăтланђĕ. Анђах куçĕ йĕпенмерĕ пĕрре те. Тути хĕррисем çеç хусканса илђĕç шăнăр туртнă пек. Йăтса тухрĕ ађине тулалла. Нимĕнпе ђĕркемен. Пĕр кĕпе вĕççĕн çеç. Таçта кайрĕ вăл арăм. Такам патне? Анђах кайалла пырса кĕмерĕ.

Ђылай йалсене çитнĕђђĕ Ваççа. Кунти пек хăрушă çавах та курманђђĕ. Ђĕр вилĕм куçа курăна пуçларĕ кунта. Куç умĕнђех етем вилли. Пӳрт тулли выçă халăх. Паллах: ку йалта нимĕн те тупăнас çук. Вилме килни пулђĕ ку йала. Çавăнпа та Ваççа халех те тухса кайма хатĕр ку йалтан.

Урасем итлемеççĕ. Ывăннă вĕсем. Çитменнине тата, каç сăнĕ çапрĕ кун çутине. Çывăрмалла пулђĕ Васçан çавăнтах. Йулђĕ çывăрма. Анђах, авăраť хырăмра.

Каç. Хурал пўртне пĕрерĕн-икшерĕн пуçтарăнаççĕ йал çыннисем. Пўрт тулсах пыраť. Пĕр сывă тĕслĕ çын курăнмасť. Шап-шурă. Кăн-кăвак. Пурте аптранă выçăпа.

— Хăш йалсем пулатăн, ађам?—ыйтрĕ пĕр кăмăллă, ватăрах çын Ваççаран. Ваçça хăй хăш йалне каласа пађĕ. Çын çине йăвашшăн пăхса илђĕ.

— Апла есĕ кам ађи пулатăн вара?

Ашшĕ йатне те463 каларĕ Ваççа.

— Ара, сирĕн патăрта, выртса-тăрса пурăнаттăмăр епĕр вăрман кăларма пырсассăн. Аçусем мĕнле пурăнаççĕ? Аннў?..

Ђылай вăрăм халапа кайрĕç старикпе Ваççа. Питĕ те куљљанђĕ Ваççа ашшĕ-амăшĕсемшĕн старик.

— Аннў питĕ те лайăх çынђђĕ. Апатсем пĕçерсе парађђĕ. Хăвăртан та çимесĕр пурăнман. Выљђăх апатсем пĕтсессĕн те...

— Пухăва уçнă шутлатăп!—претçетаттĕл сĕтел хушшине тăрса сăмах хуђĕ.

Старик хăй сăмахне каласа пĕтермесĕрех ђарăнђĕ. Çав вăхăтрах Ваççа çине йăвашшăн пăхса илђĕ. Ваççа сисмесле пек вăл куççулĕсене шăлса илђĕ. Анђах, сисрĕ ăна Ваççа. Хурланђĕ ђунĕ унăн та.

Кĕтӳ патне ҫын тытма пухăннă кĕҫĕр халăх. Анђах никам та кĕрĕшекен ҫук. Пурте выҫлăхран хăраҫҫĕ. Апат ҫукки ҫине пăхаҫҫĕ.

— Апатсăр ăҫтан ҫӳретĕн?

— Никам апат паракан пулмĕ?

— Харпăр хăй апађĕпе тытас!

— Харпăр хăйĕн камăн пур?

— Санăн пури?

Урăх нимех те калаҫмасӗ халăх та. Ытлашки сăмах-йумах ваклакан ҫук никам та. Выҫлăх апратнă пурне те. Ҫавăрса илнĕ хăй аллине вăл пĕтĕмпех.

— Ку пурнăҫа курасса ĕмĕтленменђђĕ. Выҫă вилме ҫук. Салмасемпе, улмасемпе те пулин тăрантарма пултарайатри, халăх? Тăраниђђен мар. Ђуна усрамаллăх. Вара хам ҫӳрĕп. Тупăп пĕр-пĕр ҫум ҫекки. Тен ҫак ађах та ҫӳрĕ манпала?—терĕ Ваҫҫапа пуплесе ларакан старик Ваҫҫа ҫине кăтартса, ура ҫине тăрса.

— Ђерет ҫитсен тупас пулаӗ. Анђах, хамăртан лайăх ҫитерме вăйсем ҫук вара,—терĕ халăх.

— Укҫи-тенкине хăвăр пĕлĕр.

— Тырă пултăр анђах. Кам ахаљ ҫӳрет!? Тӳсĕпĕр!—терĕҫ халăх ҫинђе темиҫе сасă.

Ҫак сăмахсене илтсен Ваҫҫа хăранă пек те пулђĕ. Ҫӳҫенсе илђĕ. Ара, кĕтӳ ађи пулас пулаӗ. Анђах ниҫта кайса кĕме те ҫук. Ҫакăнта ҫеҫ ҫăлăнăҫ. Ҫакăнта ҫеҫ пулăшу. Ҫавăнпа хĕпĕртенĕ пек те пул-

ђӗ. Старикне те Ваҫҫа сасартӑк килӗштерђӗ. Ӑшӑ кӑмӑллӑ ҫын. Ваҫҫа ҫураҫрӗ. Ваҫҫа—кӗтӳ ађи.

Айта, хамӑр пата кайса ҫыврӑпӑр. Курман ҫын ађи-пӑђи мар. Калаҫкалӑпӑр,—терӗ старик Ваҫҫана хирӗҫле тӑрса.

* * *

Халӑх саланђӗ. Ваҫҫа старик патне кайрӗ ҫыврма. Курђӗ Ваҫҫа Укахвийе. Укахвин ашшӗ пулнӑ вара ку старик, Ваҫҫана хӑй патне ҫыврма илсе кайнӑскер.

— Атте, кама илсе килтӗн?—терӗ ашшӗне Укахви, Ваҫҫасем пырса кӗрсен.

— Паллакан ҫынсен ађи ку. Есӗ палламастӑни?

— Палламастӑп.

Укахви нумайђђен шухӑшласа ларђӗ. Кӑшкар ҫине ҫип ҫӑмхалаканскер—ҫӑмхалама та ђарӑнђӗ. Каллех ҫӑмхалама тытӑнђӗ. Каллех ђарӑнђӗ. Анђах нийепле те палласа илеймерӗ. Мӗншӗн тесен, курнӑҫман пӗр-пӗринпе.

Ваҫҫа алӑк патӗнђи сак ҫинђе пӗр хускалмасӑр ларать. Хутра-ситре Укахви ҫине пӑхса илет. Анђах Ваҫҫа та паллаймасть Укахвийе.

— Амӑшӗ, улма пӗҫерхе. Ку хамӑр вӑрман кӑларма кайсан кӗрсе выртакан ҫынсен ађи,—тесе кӑтартрӗ Ваҫҫа ҫинелле карђӑкне старик.

Укахви амӑшӗ сакайне улма илме хыпаланса кӗђӗ. Укахви кӑшкарне лартса вутне ђӗртрӗ.

— Атте, ма килнĕ вăл?—пырса ыйтрĕ вăрттăн ашшĕнђен Укахви.

— Ыран калăп,—терĕ ашшĕ те хăлхаран вăрттăн.

* * *

Çак кунран пуçланса кайрĕ Ваççан Шĕкĕнтĕркассинђи пурнăçĕ. Кирек хăçан та çак куна аса илет вара Ваçça.

Ернерен кĕтўве уйа кăларђĕç. Вăрăм пушă вырт-рĕ хулпуççи çине Ваççан. Кĕтў ађи пулђĕ Ваçça.

Çак çуран вара каймарĕ йалне Ваçça. Çулла кĕтў кĕтетђĕ. Хĕлле стурăшра кивĕ шкулта. Пурнăçа ăнтарђĕ çапла майласа. Пурăнма вĕренђĕ—пурнăçа хирехирĕç çитерме.

Укахвисен ашшĕ пĕр çул пăхрĕ те, урăх тухмарĕ кĕтў патне. Çавăнпа та Ваçça урăх йулташ тупрĕ. Унăн йулташĕ хăй пекех тăлăх, Мĕкĕте. Питĕ те савăнăçлă ађа. Никам та тăлăх тесе калаймĕ. Пĕрмайах выљатаť, култараť. Ĕçне те тăваť, пултараť.

Ваççан Çынахван пиђђĕшĕ пек пулас килеђђĕ пĕрмайах. Çавăнпа та кĕнекесем, хаçатсем вулађђĕ йаланах. Хутра-ситре Укахвисем патне кайкалађђĕ. Укахвисен килйышĕнђе йуратађђĕç Ваççана.

— Çĕнĕ хаçатсене йаланах килсе вуласа пар есĕ, Ваçça,—терĕ пĕрре Укахви ашшĕ.

— Мана кĕнекесем илсе килсе пар,—терĕ Укахви.

Çакăнтан вара çине тăрсах çÿрекен пулђĕ Ваççа. Кĕнекесем, хаçатсем илсе пырса парат̆. Вуласа кăтартат̆. Çав вăхăтрах Укахвийе те вулама вĕрентет. Кĕнекесем суйласа парат̆.

Пĕрре Ваççа кĕркунне Шупашкара вĕренме кайасси çинђен тапратса йађĕ.

— Кĕреймĕн çав. Кĕрсен хам ађа вырăннех хурăттăмђђĕ те, терĕ савăнса Укахви ашшĕ Ваççана.

Çакăнтан Ваççан кăмăлĕ татах та уçăлђĕ. Пĕтĕм хавасланса кайрĕ.

— Хатĕрленетĕп те, кĕретĕп!—терĕ Ваççа. Çав вăхăтрах Укахви çине пăхса илђĕ. Укахви те хĕрелнĕ пек туйăнђĕ уншăн.

— Мĕн çинђен вулатăнха?—пырса ыйтрĕ Ваççа Укахвирен.

— Шупашкара вĕренме каймалли çинђен!—вăрахăн каласа, çемçен кулса илђĕ Укахви.

— Санран пулаймĕ ça-a-ав, хĕрĕм,—сăмаха ђăсрĕ Укахви ашшĕ.

— Çине тăрсан ма пулаймаст̆. Çине тăрас пулат̆. Епĕ те хам вĕреннипе çеç вĕт!—терĕ те Ваççа, каллех Укахви çине куçарђĕ хăйĕн кăвак куçĕсене. Йăли йăлкăшрĕ тинкерсе пăхса. Укахви те турĕ çав тĕррех. Тăвата çул хушшинђе малтанхи самант пулђĕ ку Укахвипе Ваççа хушшинђе.

— Тавай çине тăратпăр!

— Тавай!

— Марйене те ђĕнетпĕр,—хĕпĕртерĕ Укахви.

— Мĕкĕтене те. Такки кĕретпĕр,—хаваслантарђĕ Ваçça.

— Манăн та çине тăрас пуљ еппин,—терĕ сĕтел пуçĕнђе ларакан Укахви ашшĕ.

Пурте кулса илђĕç уççăнах. Укахви ашшĕ те ђĕтретрĕ сухала. Çаптарђĕ вăл та майĕпе йумаха.

Пайан вутă хутман кăмака та катаран хăй ăшшине сĕнет. Кĕлетке пĕçернĕ пек туйăнат. Çанçурăм ăшăрхаса, сивĕнсе, вăрахăн хăй вырăнне ларат.

Кăмака тăрринђи кушакĕ тем вăхăтра аннă, никам та курман. Укахвипе Ваçça хушшинђе пĕрре—пĕрне сĕртĕнет; тепре—тепĕрне сĕртĕнет. Пăрушинлă хӳрене ђăскалат те, хуçкалат. Тимĕрђ вĕркĕђ вĕрнĕ пек, ађашланса мăрлатат.

— Е-е-е, ку кушак,—терĕ Укахви.

— Хĕвел раснах çутă пайан. Çуркунне пулђĕ. Сисетне, Укахви?—терĕ Ваçça Укахви аллинђи кушака хăй аллине илсе. Кăвак куçпа хура куç хирĕç пулђĕç. Темĕн каларĕç пĕр-пĕрне.

— Сисетĕп, терĕ Укахви.

*

* *

Çил ађисем ташламаççĕ уйра йавăнса. Кашламасť тип тусан пĕлĕте кармашса. Лăпкă тăраť çанталăк, питĕ лăпкă. Хутра-ситре вĕтĕ çăмăр килсе

пĕрĕхет. Кĕркунне майĕпе нӳрелнĕ çĕре пĕтĕмпех йĕпетет.

— Çанталăк кун пек тăрсассăн, шанђăк пур,— пĕрпĕринпе хавассăн пуплеççĕ хресђенсем. Кунтăкран сирпĕтеççĕ ывăçпа тыррине. Хыçран йĕр тăваççĕ ўыхаллă кĕсресем йăвăç сӳрепе.

Анкарти хыççипе тăваттăн тухса утрĕç Шупашкар йенелле. Ваççа, Мĕкĕте, Укахви, Марине кайрĕç хăйсен пĕлӳне тĕрĕслеме.

— Атте арман хуçи пулнийех пĕтерђĕ мана,— ĕсĕклесе тăрса йулђĕ анкарти хапхи çумне Пăлаки.

— Ытла та пĕр саспалли те паллаймастăпçке. Ђисти тунката ĕнтĕ епĕ. Ђисти, есĕр кĕрсен вара... Ах, ахаљ...—куçĕсене хупкаласа илђĕ хурланнипе, ăсатма тухнă, Урине.

— Пирĕнтен йулмăнçке. Кăçал...

— Сывă пулăр еппин. Лайăх çул пултăр,—хăйĕн ђунĕ хурланнине палăртасшăн мар хăвăрт пӳлђĕ Укахвийе Урине.

Мăн çула тухиђђен утмаçулпа пыраççĕ Шупашкар хăнисем. Сухаланă тăпра хытă, ванмасў йăвăç сӳрепе. Кĕсрисем те аран туртаççĕ выçăпа сӳрине.

— Трактăр кӳмелле ĕнтĕ пирĕн çак уйа. Кĕрисем вĕсем отстăвкка тухмалла,—терĕ Ваççа йулташĕсене уй çине кăтартса.

— Такки ҫын пулаҫҫӗ ӗнтӗ ҫавсем. Вӑт... Ҫине тӑрса тӑрӑшаҫҫӗ те...—кунтӑк ҫинђе ывӑҫа ђӑмӑртанипех пӑхса тӑрса йулђӗҫ Йаккупа Ҫеркей.

Ҫанталӑк сивӗтнӗ пек пулђӗ. Кӑнтӑрла тӗлнелле сивӗ ҫӑмӑр пӗрӗхме тытӑнђӗ. Ҫанталӑк улӑшрӗ йӑкӑлтах. Тырӑ акма йурамасť. Тађкалђӗ. Пӗтӗрӗнет сӳре тавралла.

— Лашапах ӑсатмаллађђӗҫ. Ывӑнаҫҫӗ пуљ ҫурран... Тапру... Пайан... Лашипе те...—терӗ тултан кӗрсе Укахвин ашшӗ—кӑмака умӗнђе аппаланакан амӑшне.

Чебоксары, типо-литография шк. ФЗУ Чувашгиза

Чувашлит № 342 Заказ № 485 Тираж 5.000 экз.

Цена 12 коп.

С. Толмасов (Ç. Шăпҕăк). ВАСЯ (рассказ).

Чебоксары ◆ ЧУВАШГОСИЗДАТ ◆ 1930 год